Пенси ыйтăвĕсемпе

# Страхламан тапхăра та шута илеççĕ

Çĕнĕ пенси законодательствипе килĕшӳллĕн малашне пенси шутласа панă чухне страховани взносĕсемпе пĕрлех страхламан тапхăра та шута илме тытăнĕç. Кусем вĕсем призывпа çар службинче пулнă, ача çулталăк çурăна çитиччен пăхса пурăннă тапхăр (анчах та пĕтĕмĕшле 3 çултан ытла пулмалла мар).

2009 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 2008 çулхи июлĕн 22-мĕшĕнче йышăннă «Раççей Федерацийĕнче ĕç пенсийĕсене шутласа парасси пирки калакан хăш-пĕр законодательство акчĕсене улшăнусем кĕртесси çинчен» 146-ФЗ Федераллă саккун вăя кĕрет. Унпа килĕшӳллĕн страховани стажĕ шутне страхламан ытти хăш-пĕр тапхăрсене те кĕртме тытăнаççĕ. Кусем вĕсем:

– ĕçлеме пултаракан çын 1-мĕш ушкăн инвалидне, инвалид-ачана е 80 çула çитнĕ ватă çынна пăхса пурăннă тапхăра;

– енчен те упăшки контрактпа çар службинче тăрать пулсан, мăшăрĕ унпа пĕрле пулнă май служба вырăнĕнче вăл ĕçе вырнаçма май тупаймасть пулсан, пĕрле пулнă тапхăра, анчах та ку вăхăт пĕтĕмĕшле 5 çултан ытла пулмалла мар;

– мăшăрĕсене Раççей Федерацийĕн (СССР) ют çĕр-шывсенчи консул учрежденийĕсене, дипломати тата ытти яланлăх представительствăсене янă пулсан, вĕсемпе пĕрле пурăннă тапхăра, анчах та ку вăхăт пĕтĕмĕшле 5 çултан ытла пулмалла мар.

Страхламан асăннă тапхăрсене шута илсе пенсисен страхланă пайне çĕнĕрен шутласа парасси пенсионерсем Раççей Федерацийĕн Пенси фончĕн хăйсем пурăнакан вырăнти территори управленийĕсене заявлени çырса панă хыççăн тытăнать.

Енчен те заявление 2008 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕнчен кая юлмасăр çырса панă пулсан, пенси виçине 2009 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа çĕнĕрен шутласа параççĕ.

Çак вăхăт иртнĕ хыççăн заявлени çырса парсан вара заявлени çырса панă уйăх хыççăнхи уйăхăн 1-мĕш числинчен тытăнса ĕç пенсийĕн страхланă пайне çĕнĕрен шутласа парĕç.

**Е. КОСТИНА,**
**РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн пенсисем шутласа парас, çĕнĕрен шутласа парас тата тӳлес, страхланă çынсен пенси прависене хак парас енĕпе ĕçлекен пай пуçлăхĕн çумĕ.**

Учительсен кунĕ умĕн

# Вĕрентекен яланах асра

Телейлĕ ачалăхăн саманчĕсене аса илнĕ май хамăн шкул пурнăçне яланах асра тытатăп. Кам-ха манĕ шкулти пĕрремĕш шăнкăрава, пĕрремĕш вĕрентекене, пĕрремĕш урока? Халĕ, вĕрентекенсен уявĕ çитсе пынă май, иртнĕ кунсене аса илетпĕр, хамăр ĕнтĕ çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕсенче пулсан та, шухăшсемпе тăван шкула вĕçсе килетпĕр.



Эпĕ Москакасси шкулĕнче 10 çул хушши ăс пухнă. Пур вĕрентекен те пирĕншĕн аслă юлташ вырăнне пулса пĕлӳ тĕнчи тăрăх ертсе çӳренĕ. Пур вĕрентекене те унăн питĕ пысăк тав. Çапах та кам манĕ-ха хăйĕн пĕрремĕш вĕрентекенне? Темиçе çул иртнĕ пулсан та, хамăра пĕлӳ тĕнчинче пĕрремĕш утăмсем тума пулăшнă хаклăран та хаклă çынна ăшă туйăмсемпе кăна аса илетĕп.

Пирĕн пĕрремĕш вĕрентекен Роза Гурьевна Федорова пулнă. Халĕ те вăл Москакасси шкулĕнчех вăй хурать. Астумастăп, сассине хăпартса пире ятлани пулнă-ши унăн? Çав тери пуян чĕреллĕ, ăшă кăмăллă, çепĕç саслă, чуна парса ĕçлекен учитель пулнă вăл пирĕншĕн. Халĕ те, унтанпа сахал мар çул иртнĕ пулин те, яланах пирĕншĕн вăл чи хитри те, чи лайăххи те.

Пĕчĕк чухне тав сăмахĕ калама пĕлмен те пулĕ ĕнтĕ эпир. Халĕ вара, Роза Гурьевна, хăвăр вĕрентнĕ ачасенчен çĕре çити тав сăмахĕ йышăнсамăр. Çул çинче тĕл пулсан та халĕ эсир яланах пирĕн пурнăç çинчен ыйтса пĕлетĕр, пирĕнпе савăнатăр, пирĕнпех хурланатăр. Çапла пулĕ çав вăл пуçламăш класс учителĕн шăпи. Хăв вĕрентнĕ ачасем яланах хăвăнах юлаççĕ. Вĕрентекенĕн чĕри ачасен чунĕсенче пулĕ.

Малашне те сирĕн хăвăрăн вĕренекенсемпе савăнмалла кăна пултăр, вĕсен çитĕнĕвĕсемпе мухтанмалла пултăр. Çитсе килекен уяв ячĕпе сире саламласа ырлăх-сывлăх, телей, ăнăçу сунаççĕ эсир вĕрентнĕ ачасем.

**Оксана СТОЛЯРОВА.**

Москакасси ялĕ.

Сăмахăм асаннем пирки

# Йывăрлăхра пуçне усман

Манăн асанне Татьяна Германовна Николаева Комсомольски районĕнчи Вутлам ялĕнче 1938 çулхи августăн 7-мĕшĕнче çуралнă. Çăмăл пулман унăн пурнăçĕ. Вăрçă пуçлансан иккĕмĕш куннех ашшĕне вăрçа илсе кайнă. Ашшĕнчен мĕн пурĕ те икĕ çыру илнĕ. Унтан вăл хыпарсăр çухалнă, вăрçăран таврăнман.

Амăшĕ фермăра ĕçленĕ. Виçĕ хĕр тăлăха юлнă. Шкула кайма çул çитсен амăшĕ хуйхăпа чирлесе кайнă. Çавăнпа вăл пĕр уйăх кăна шкула çӳренĕ. 7 çулхи хĕр ачан 70 çулхи асламăшĕпе пĕрле амăшĕ вырăнне ĕçлеме çӳреме тивнĕ.

Амăшĕ кăшт сывалсан асаннен икĕ йăмăкне шкула вĕренме янă. Манăн асанне хăйĕн йăмăкĕсем те пулин вĕренччĕр тесе ĕçлеме тăрăшнă. Килти ĕçсене тума та пулăшнă, выльăх-чĕрлĕх пăхнă. Пĕчĕклех ала ĕçне вĕреннĕ. Чăлха-нуски çыхнă, чĕнтĕр тĕрленĕ, кофтăсем çыхнă, çĕленĕ.

1970 çулта Чамăш ялне качча килнĕ. Асаттепе 3 ача пăхса ӳстернĕ: икĕ ывăл тата пĕр хĕр. Атте чи кĕçĕнни пулнă. Асаттене эпир курман. Вăл чирлесе вилнĕ. Аттен пиччĕшĕ те сарăмсăр вилнĕ.

Асанне савăнăçне нумаях курман. Паллах, йывăр пулнă ăна виçĕ ачине ӳстерме. Анчах чăтнă вăл, пепкисемшĕн пурăннă, вĕсене çын тума тăрăшнă. Халĕ вара вĕсем пурте çемьеллĕ, асаннен сакăр мăнук ӳсет.

Мĕн качча килнĕрен вара «Красное Сормово» колхозра дояркăра ĕçленĕ. Тивĕçлĕ канăва тухсан икĕ çул ытла бригадăра вăй хунă. Нумай çул фермăра ĕçленипе унăн алли-урисем те ыратма пуçланă. Асанне ахальтен мар ĕнтĕ «Ĕç ветеранĕ» ята илме тивĕç пулнă. Унăн тĕрлĕрен Хисеп грамотисем те сахал мар.

Эпир Алеша шăллăмпа иксĕмĕр те асаннене питĕ юрататпăр. Вăл пире ĕлĕкхи пурнăç çинчен каласа кăтартма кăмăллать. Шкултан таврăнсан нумайччен шкулти пурнăç çинчен каласа паратпăр. Пирĕнтен кашни кунах мĕнле паллăсем илни çинчен ыйтса пĕлет. Мĕншĕн тесен хăйĕн вĕренме май пулман пирки пире лайăх вĕренме сĕнет. Эпир вара унăн шанăçне тӳрре кăларма тăрăшатпăр, «4» тата «5» паллăсемпе кăна ĕлкĕрсе пыратпăр. Эпĕ иртнĕ вĕренӳ çулĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕн стипендине илме пултартăм.

Хăш чухне асанне пире ятлакаласа та илет. Çапах эпир кӳренместпĕр. Мĕншĕн тесен вăл пире ыррине кăна сунать.

Асанне çамрăк мар ĕнтĕ, апла пулин те тирпейлĕ. Вăл икĕ туяпа кăна çӳрет, çапах та эпир шкултан таврăннă çĕре вĕри яшка пĕçерет, кил-тĕрĕшре тăрăшать.

Юратнă асанне, эпир сана Ватă çынсен кунĕ ячĕпе саламласа чирлемесĕр нумай çул пурăнма ырлăх-сывлăх, вăрăм ĕмĕр, канлĕ ватлăх сунатпăр.

**Настя НИКОЛАЕВА,**
**Оринин шкулĕнче 6-мĕш класра вĕренекен.**

Аттене юлашки çула ăсатнă май

# Ыр çын вилет – йĕр юлать...

Пирĕн аттене – Катькас ялĕнче çуралса ӳснĕ, хăй ĕмĕрне унтах пурăнса ирттернĕ Леонид Кузьмич Тямина юлашки çула ăсатрăмăр. Унта хутшăннисене, калама çук пысăк хуйхăна пирĕнпе пĕрле пайланисене – Муркаш район администрацине, РФ Пенси фончĕн Муркашри уйрăмĕн, районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ĕçченĕсене, «Моргаушрайбыт» предприяти ертӳçине А.П. Давыдова, вăрçăпа ĕç ветеранĕсен районти канашне, Катькас ял тăрăхĕнче ĕçлекенсене, Катькас ялĕнче пурăнакансене пурне те, мĕн пур ял çыннисене, уй урлă килекен пĕрле ĕçленĕ тус-юлташĕсене, тăван-хурăнташсене, пускилсене чун-чĕререн тав сăмахĕ калатпăр.

Аттем пирки çавна каласа хăварма пултаратăп. Пирĕн атте электрик профессине алла илнĕ чухне асатте «Колос» колхоз председателĕнче ĕçленĕ. Ăна Кузьма Яковлевич Тямин тесе чĕннĕ. Яла çутă парас тесе хăватлă двигатель туянаççĕ. Çав двигательпе усă курса 1948 çултан пуçласа 1965 çулхи февраль уйăхĕччен яла çутă парса тăраççĕ.

Ун чухне 18 сехетрен тытăнса 23 сехетчен кашни килтех лампочкăсем çуннă. Вăл вăхăтра ĕç кĕнекисем тата паспортсем алла паман. Колхозра ĕçлекен пулмасть тесе хăранă.

Аттем тăрăшнипе майĕпен подстанцисем тума тытăннă. Кайран «Чувашские электрические сети» текен организаци ăна ĕç кĕнеки парать. Л.К. Тямин Катькас тăрăхĕнче кăна мар, районта та «Ильич лампочкисене» çутма пуçăннă электриксенчен пĕри пулнă. Электричество парса тăма усă курнă двигателе кайран Е. Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăха укçаллă сутса янă.

Районта ытти ялсенче ниçта та электричество çути пулман. Атте патне юнашар ялсенчен те вĕренме килекенсем пулнă. Ăна районти чи пĕрремĕш электрик тенĕ. Тĕрлĕрен наградăсем те сахал мар унăн. Вĕсен шутĕнче Хисеп грамотисемпе дипломсем, «Ĕçре палăрнăшăн», «1941–1945 çулсенчи Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчи хастар ĕçшĕн» медальсем тата ыттисем те.

Çапла вара вăл пенсие тухиччен те, пенсие тухнă хыççăн та, 1991 çулччен пĕр улшăнмасăр хăй юратнă ĕçĕнчен уйрăлман.

Тăпри çăмăл пултăрччĕ унăн. Пире, 5 ачине, аннепе иккĕшĕ ура çине тăратса пурнăç çулĕ çине кăларнăшăн тавах вĕсене.

**Эпир, унăн мăшăрĕ, 4 ывăлĕпе вĕсен кинĕсем, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, прамăнукĕсем, вăл пирĕнтен вăхăтсăр уйрăлса кайнипе чун-чĕререн хурланни çинчен çырса пĕлтерес терĕмĕр. Тав сăмахĕ калатпăр пурне те.**

Актуально

# ПРО ФИНАНСЫ И РОМАНСЫ

**ЧТО ТАКОЕ ЭКОНОМИЧЕСКИЙ КРИЗИС И КАК ЖИТЕЛЯМ ЧУВАШИИ СОХРАНИТЬ СВОИ ДЕНЬГИ**

***Поговорка «финансы поют романсы» наверняка известна любому человеку, говорящему на русском языке. Равно как и ее смысл: нет денег. Но если в последнее время для большинства жителей республики это изречение было не очень актуально (все-таки жить мы стали лучше), то сейчас у многих возникает подозрение, что относительно благополучные времена заканчиваются, и финансы вот-вот «запоют».***

**ЧТО ПРОИСХОДИТ**

Причина нашего беспокойства исходит из «ящика» и из газет (кто их читает). Средства массовой информации каждый день говорят и пишут о финансово-экономическом кризисе. Звучат названия американских банков, которые лопаются как мыльные пузыри. Тем самым нам как будто намекают на российские банки, да еще вспоминают дефолт 1998 года. Вполне естественно, что человеку, который плохо ориентируется в направлениях и нюансах мировой экономики, от таких новостей становится не по себе. Еще свежи воспоминания о лопнувших российских банках, сгоревших вкладах и рухнувших пирамидах. Неужели опять?

Чтобы понять, как в этих условиях сохранить свои сбережения (неважно – 3 тысячи рублей у вас на книжке или 30 тысяч долларов), следует все-таки разобраться в том, что происходит на самом деле. Хотя бы, так сказать, в общих чертах.

По утверждению специалистов, все началось еще осенью прошлого года, когда в США появились симптомы ипотечного кризиса. До этого времени американские банки раздавали кредиты на жилье практически всем желающим (даже людям с невысокими доходами), причем под очень низкие проценты. В результате возникла проблема «невозвратов»: заемщики перестали выплачивать долги. Рыночная стоимость банковских активов – ценных бумаг, выданных под ипотечные кредиты, резко упала, что принесло огромные убытки. И, как мы знаем, сейчас многие крупнейшие мировые банки вплотную подошли к банкротству.

На языке финансистов это называется «кризис ликвидности», то есть, неспособность банков отвечать по своим обязательствам, невозможность вернуть клиентам их накопления, взятые на хранение.

Чтобы спасти положение, банки бросились на биржу – забрать свои деньги, вложенные в ценные бумаги. И тогда начался кризис на фондовом рынке (акции резко подешевели), причем – в мировом масштабе.

**СЧЕТ НА РУБЛИ**

Начавшийся финансово-экономический кризис задел, конечно, и Россию, но – лишь косвенно. Дело в том, что около 20 крупнейших банков нашей страны (за исключением разве что Сбербанка) привыкли брать кредиты у своих зарубежных коллег. Причина все та же - «дешевые деньги», то есть очень низкие процентные ставки. Само собой, участвуют российские банки и в международных торгах на рынке ценных бумаг. Вот почему многие эксперты считают, что в России раздается лишь «эхо» финансово-экономического кризиса, разразившегося в мире.

Как бы там ни было, но рядовые россияне это самое «эхо»уже почувствовали на себе. Поползла вверх кривая инфляции: отправляясь в магазин за продуктами, граждане теперь вынуждены брать больше денег, нежели раньше. Кроме того, стало гораздо труднее получить кредит в банке – требования ужесточились, да и проценты по многим видам займов заметно подросли…

Неизвестно, во что бы все это вылилось, если бы не своевременная реакция российского правительства. Возможно, кто-то уже слышал, что на исправление сложившейся ситуации власти выделили банкам более 1,5 триллиона (!) рублей. Причем, на депозитах трех отечественных банков - Сбербанка России, ВТБ и Газпромбанка Минфин РФ разместит 1 триллион 126,6 миллиарда рублей. Сбербанку правительство доверило 754,2 миллиарда рублей, ВТБ – 268,5 миллиарда, а Газпромбанку – 103,9 миллиарда рублей.

Почему именно им? Догадаться нетрудно – все три банка достаточно устойчивы, твердо стоят на ногах и являются надежными партнерами государства. Это означает, что переданные им на хранение миллиарды никуда не денутся и, что называется, «пойдут в дело». Кстати, основное условие, оговоренное правительством, заключается в том, что эти банки станут «проводниками ликвидности», то есть смогут одалживать деньги другим банкам, которые раньше брали займы за рубежом.

**СОВЕТЫ ПОСТОРОННЕГО**

Как видим, ситуация постепенно «разруливается». Во всяком случае, в России власти делают для этого все возможное. Однако вопрос – что сейчас делать рядовым россиянам с деньгами (у кого они есть) – все еще актуален. Автор этих строк - не экономист по образованию, а потому не берется давать какие-либо советы. Таким правом, согласитесь, обладают только профессионалы, причем – специалисты высокого класса. И у нас есть возможность узнать мнение одного из таких «профи».

Совсем недавно состоялась первая селекторная Всероссийская пресс-конференция с главным экономистом Сбербанка России Ксенией Юдаевой. В интерактивной конференции, к слову, приняли участие около двух тысяч журналистов из разных городов России, в том числе – из Чебоксар.

Так вот, первое, что посоветовала Ксения Юдаева россиянам – не мучиться над вопросом выбора валюты. Доллар, как известно, в последнее время подорожал, но не факт, что этот рост продолжится. Наоборот, не исключено, что стоимость «зеленых» по отношению к рублю снова пойдет на снижение. Поэтому, считает эксперт, свои сбережения лучше хранить в российской валюте, то бишь – в рублях.

Впрочем, если денег у вас много, стоит уподобиться той самой хозяйке с яйцами – положить деньги в три «корзины». При этом основную сумму все-таки следует держать в рублях, советует Ксения Юдаева, а для долларов и евро лучше выбрать «корзинки» поменьше.

Еще один совет касается вложения средств в недвижимость.

- Если сейчас вам нужна квартира для жилья, то ее, конечно, необходимо приобретать, - говорит эксперт. - Но покупать про запас, с целью инвестирования, сдачи или последующей продажи пока не стоит, так как ситуация на рынке сегодня нестабильная. Например, в ряде регионов намечается тенденция к снижению цен на недвижимость, в частности – на Урале.

Не советует Ксения Юдаева и вкладывать деньги в ценные бумаги. По мнению эксперта, играть на фондовом рынке должны профессионалы.

- Правда, если у вас очень крепкая нервная система, вы можете вкладываться в долгосрочные проекты, - добавляет она. - Но учтите, что вам придется переживать такие моменты, когда вы будете видеть, как ваши вложения резко обесцениваются.

**СБЕРЕЧЬ ИЛИ ПРИУМНОЖИТЬ**

Как видим, эксперт не столько советует, как поступить в сложившейся ситуации, сколько наоборот – призывает не предпринимать те или иные шаги. И это, наверное, правильно. Однако журналистам все-таки хотелось получить прямой ответ на главный вопрос «Что делать?». И он прозвучал:

- Сейчас с финансами очень рискованная ситуация в мире и в России, поэтому главное на данный момент не гнаться за высоким доходом, а просто сохранить свои средства, - считает Ксения Юдаева. - От стратегии приумножения необходимо перейти к стратегии сохранения, а при выборе банка нужно ориентироваться на его надежность, а не на высокую доходность по ставкам.

Словом, мы должны понять главное: «прирастить» свои капиталы сегодня вряд ли удастся. Задача более скромная: постараться сохранить личные сбережения. На этой цели и стоит сосредоточиться, пропуская мимо ушей навязчивую рекламу многих банков, обещающих высокие проценты. Пусть проценты будут ниже, лишь бы банк был надежным. Если мы это поймем (и возьмем на вооружение), наши финансы не станут «петь романсы».

**Оксана БОРИСЕНКО.**